Г. Кузнецов

**Геннадий Волкова**

«Ĕçĕ-хĕлӳ ĕмĕрсене ăмсантармалăх
юлнишĕн чи малтан кама тав тумалла?» –
çапла ыйтсан каларăн мар-и эсĕ: «Халăх
ăсĕпеле вăйне эп илтĕм çурмалла.
Аннем чĕлхипеле канашлакан йăмралăх
мана халавлăн йыхăрсан малтан-мала,
аттем пиллерĕ: «Йăх ятне çӳле йăтмалăх
пĕлӳ çупçин мулне сан вĕçĕм хушмалла».
Лачкам тара ӳксе чун кĕтнине шырарăм.
ырсан та – çур çулта тăмарăм чарăнса,
хамран иртекене пăхмарăм ăмсанса...
Ĕненӳпе ăнтăлăва текех мухтарăм,
хавшак чĕре юрри юхман та шăранса,
«Эп çитнĕ пĕтĕмпех теме пултараймарăм».